26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
26
ЫТЛАРИКУН
213(6450) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

Украинари 3-мӗш фронтӑн ҫарӗсем, **Украинари** Арми генералӗ **Конев** ертсе пыракан 2-мӗш фронтӑн ҫарӗсем флангран татӑклӑн пулӑшнипе, **Днепр** шывӗн сылтӑм енче ӑнӑҫлӑ наступлени туса пырса, паян, октябрӗн 25-мӗшӗнче, Украинӑри область центрне **Днепропетровск** хулине тата **Днепродзержинск (Каменское)** хулине—пирӗн ҫӗршыв Кӑнтӑрӗнчи питех те паха промышленность центрӗсене тата **Днепр** шывӗн кукринчи нимӗҫсен оборонин пысӑк тӗввисене—штурмласа тытса илнӗ.

Днепропетровск тата **Днепродзержинск** хулисене ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче **Глаголев** генерал-майорӑн, **Кособуцкий** генерал-майорӑн, **Алферов** генерал-майорӑн ҫарӗсем, авиаци генерал-лейтенанчӗн **Судецан** летчикӗсем, артиллери генерал-лейтенанчӗн **Неделинан** тата артиллери генерал-майорӗн **Алексеенкӑн** артиллерисчӗсем чапа тухнӑ.

Уйрӑмах ҫаксем чапа тухнӑ:

Кулижский полковникӑн 152-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Фесин** полковникӑн 236-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Сучков** полковникӑн 195-мӗш Ново-Московски стрелковӑй дивизийӗ, **Колчук** генерал-майорӑн 353-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, **Гречаный** генерал-майорӑн 6-мӗш Хӗрлӗ Ялавлӑ Орловски стрелковӑй дивизийӗ, **Бровко** полковникӑн 3-мӗш гвардейски инҫене вӗҫекен авиаци дивизийӗ, **Осадчий** полковникӑн 11-мӗш гвардейски истребительнӑй авиаци дивизийӗ, **Линенко** подполковникӑн 58-мӗш гвардейски минометнӑй полкӗ, **Бородько** майорӑн 437-мӗш истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ, **Баландин** подполковникӑн 4-мӗш понтонсемпе кӗперсен бригади, **Номинас** подполковникӑн 5-мӗш понтонсемпе кӗперсен бригади, **Коржов** подполковникӑн 8-мӗш механизированнӑй понтонсемпе кӗперсен полкӗ, **Миронов** подполковникӑн 518-мӗш тупӑллӑ артиллери полкӗ, **Голубчиков** подполковникӑн 1114-мӗш ҫӳлелле перекен артиллери полкӗ, **Костенко** майорӑн 109-мӗш гвардейски тупӑллӑ артиллери полкӗ, **Визиров** полковникӑн 51-мӗш инженерла-саперла бригади, **Шкадов** подполковникӑн 52-мӗш уйрӑм танковӑй полкӗ.

Тунӑ ӗҫсене асӑнса ҫӗнтерӳ ярса ячӗ... ; Туна ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, **Днепропетровск** тата **Днепродзержинск** хулисене ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене **„Днепропетровски"** тата **„Днепродзержински"** тесе ят парас.

Малашне ҫав соединенисемпе чаҫсене ҫапла чӗнмелле тӑвас.

152-мӗш Днепропетровски стрелковӑй дивизи,

236-мӗш Днепропетровски стрелковӑй дивизи,

3-мӗш гвардейски Днепропетровски инҫене вӗҫекен авиаци дивизийӗ,

11-мӗш гвардейски Днепропетровски истребительнӑй авиаци дивизийӗ,

58-мӗш гвардейски Днепропетровски минометнӑй полк,

4-мӗш Днепропетровски понтонсемпе кӗперсен бригади,

5-мӗш Днепропетровски понтонсемпе кӗперсен бригади,

8-мӗш Днепропетровски механизированнӑй понтонсемпе кӗперсен полкӗ,

518-мӗш Днепропетровски тупӑллӑ артиллери полкӗ,

1114-мӗш Днепропетровски ҫӳлелле перекен артиллери полкӗ,

353-мӗш Днепродзержински стрелковӑй дивизи,

437-мӗш Днепродзержински истребительнӑй противотанковӑй артиллери полкӗ,

109-мӗш гвардейски Днепродзержински тупӑллӑ артиллери полкӗ,

51-мӗш Днепродзержински инженерла-саперла бригада,

52-мӗш Днепродзержински уйрӑм танковӑй полк.

195-мӗш Ново-Московски стрелковӑй дивизипе 6-мӗш Хӗрлӗ Ялавлӑ Орловски стрелковӑй дивизие, нимӗҫ захватчикӗсемпе ҫапӑҫса иккӗмӗш хут чапа тухнӑскерсене, **Хӗрлӗ Ялав** орденӗсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, октябрӗн 25-мӗшӗнче, 22 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици **Мускав Днепропетровск** тата **Днепродзержинск** хулисене ирӗке кӑларнӑ хамӑрӑн паттӑр ҫарсене икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑран ҫирӗм хут пӗр харӑс персе Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питех те чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, **Днепропетровск** тата **Днепродзержинск** хулисене ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, тав тӑватӑп.

Хамӑр Тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене—вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 ҫулхи октябрӗн 25-мӗшӗ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн генералӗсене, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен составне Совет Союз Геройӗн званине пани

Киевран кӑнтӑртарахра Днепр шывӗ урлӑ ӑнӑҫлӑн каҫнӑшӑн, Днепр шывӗн сылтӑм енче вӑйлӑн ҫирӗпленсе ларнӑшӑн, ҫав ӗҫсенче хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн, СССР Верховный Совет Президиумӗн 1943-мӗш ҫулхи октябрӗн 23-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫар генералӗсене, офицерӗсене, сержанчӗсене тата рядовой боецӗсене, пурӗ 136 ҫынна, Ленин орденӗпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградӑласа, Совет Союз Геройӗн званине панӑ. (ТАСС).

Ҫыхӑну ӗҫенче ӗҫлекенсем ирӗке тухнӑ районсене каяҫҫӗ

Ҫыхӑну ӗҫенче ӗҫлекен ҫынсем Ҫыхӑну халӑх комиссариатне, хӑйсене нимӗҫсенчен ирӗке кӑларнӑ районсене яма ыйтса, темиҫе ҫӗр заявлени панӑ. Юлашки икӗ уйӑх хушшинче Ҫыхӑну халӑх комиссариачӗ ҫав районсене 1.300 ҫын янӑ. Кунсӑр пусне, Мускаври, Ташкентри тата Алма-Атари электротехникумсенчен, вӗренсе тухнӑ ҫынсем Украинӑна тата Белоруссие тухса кайнӑ.

Ҫыхӑну халӑх комиссариачӗ ҫумӗнче, ирӗке кӑларнӑ районсене ямалӑскерсем, ҫав ӗҫсенче ӗҫлекен ҫынсен тата массӑллӑ квалификациллӗ ҫынсен резервне тӑваҫҫӗ. (ТАСС).

Республикӑри ӗҫҫыннисем укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерея билечӗсене пысӑк хавасланхпа туянаҫҫӗ

Пӗр кун хушшинче 17 миллион тенкӗлӗх сарнӑ

Пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем правительство укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейине иртерме йышӑнни ҫинчен пӗлтерекен хыпара пысӑк ҫӗкленӳпе кӗтсе илчӗҫ. Октябрӗн 25-мӗшне пӗтӗм чӗререн кӗтсе, лотерея билечӗсене илме хатӗрленчӗҫ.

Малтанхи кунах укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейин билечӗсене республикӑри ӗҫҫыннисем хушшинче пӗтӗмпе 17 миллион та 160 пин тенкӗлӗх сарнӑ, вӑл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче—2.880.000 тенкӗлӗх, колхозниксем хушшинче 14.280.000 тенкӗлӗх сарнӑ. Малтанхи кунах лотерея билечӗн укҫине 10.073.000 тенкӗ пухнӑ. Уйрӑмах ҫак районсенче лотерея билечӗсене сарасси ӑнӑҫлӑн пулса пырать: Шупашкар хулинче лотерея билетне 1.184.000 тенкӗлӗх, Шупашкар районӗнче 1.204.000 тенкӗлӗх, Вӑрмар районӗнче 1.175.000 тенкӗлӗх, Етӗрне районӗнче 1.010.000 тенкӗлӗх, Комсомольски районра 946.000 тенкӗлӗх сарнӑ. Билетшӑн укҫа пухас ӗҫ Шупашкар районӗнче аван пырать, унта 1.025 пин тенкӗ тӳленӗ те ӗнтӗ. Лотерея билечӗн укҫине Вӑрмар районӗнче 975 пин тенкӗ, Октябрьски районра 853 пин тенкӗ, Сӗнтӗрвӑрри районӗнче 790 пин тенкӗ пухнӑ. Малта пыракан колхозниксем лотерея билетне темиҫе пиншер тенкӗлӗх сыранаҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Тоскинейри колхоз председателӗ Кузьмин тата Михайлов юлташсем, отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗсем, лотерея билетне 3-шер пин тенкӗлӗх тӳлесе илнӗ.

Анчах ҫак районсенче лотерея билечӗсене сарма ҫителӗксӗр хатӗрленнӗ: Калинино районӗнче лотерея билетне 318 пин тенкӗлӗх ҫеҫ, Советски районра 327 пин тенкӗлӗх, Красноармейски районра 444 пин тенкӗлӗх, Ҫӗрпӳ районӗнче 469 пин тенкӗлӗх ҫеҫ сарнӑ.

Укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейи пирӗн тӑван ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне ӳстерме, нимӗҫ захватчикӗсене ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫе хӑвӑртлатма пулӑшать. Ҫакӑн ҫинчен рабочисемпе колхозниксене тӗплӗн ӑнлантарса парас пулать, кашни ӗҫҫыннинех лотерея билечӗсем илтерессишӗн кӗрешес пулать. Ҫакӑн пек ӗнтӗ партипе совет тата профсоюз организацийӗсен задачи.

Укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейин билечӗсене илсе, тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫара пулӑшар!

Тӑшмана тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тӑкма

СӖНТӖР, октябрӗн 25-мӗшӗ. (Телефонпа). Укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерея билечӗсене сарасси пысӑк ҫӗкленӳпе пулса пырать. Рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе колхозницӑсем нимӗҫ захватчикӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тӑкма мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас шухӑшпа лотерея билечӗсене ҫӗршер, пиншер тенкӗлӗх туянаҫҫӗ. Сятракасси ялсоветне кӗрекен колхозсенчи колхозниксемпе колхозницӑсем 12 сехет тӗлне лотерея билечӗсене 24.000 тенкӗлӗх туяннӑ.

Чылай предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисем лотерея билечӗн укҫине ҫийӗнчех тӳлеҫҫӗ. «Дружба» промартельте ӗҫлекенсем лотерея билечӗсене 5.000 тенкӗлӗх ҫыраннӑ. Вӗсем укҫине те ҫийӗнчех тӳленӗ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Колхозниксен кӑмӑлӗ

ИШЛЕЙ, октябрӗн 25-мӗшӗ. (Телефонпа). Колхозниксемпе колхозницӑсем укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерея билечӗсене пысӑк хаваслӑхпа туянаҫҫӗ. «Красный танк» колхоз членӗсем пӗр-икӗ сехет хушшинчех лотерея билечӗсене 55.000 тенкӗлӗх илсе укҫине ҫавӑнтах тӳлерӗҫ. Чылай колхозниксем лотерея билечӗсене пиншер тенкӗлӗх илеҫҫӗ. Ҫапла, А. Улангин юлташ 1.500 тенкӗлӗх, Сидоров 800 тенкӗлӗх илнӗ.

«Красный пахарь» колхозра та лотерея билечӗсене сарас ӗҫе хӑвӑрт ирттерчӗҫ. Колхозницӑсем М. Яковлева, М. Мужлаева юлташсем 800-шер тенкӗлӗх илнӗ. Ку колхозра лотерея билечӗсене пурӗ 21.000 тенкӗлӗх сутнӑ.

Ярапайкасси ялсоветне кӗрекен колхозсенче те лотерея билечӗсене сарасси ӑнӑҫлӑн пырать. Ялсоветри 5 колхозран тӑваттӑшӗнче билетсене сутса пӗтернӗ. «Синьялы» колхоз членӗсем лотерея билечӗсене 14.000 тенкӗлӗх туянчӗҫ. Колхоз председателӗ Н. Илбаторкин 1.500 тенкӗлӗх, колхозник А. Николаев 1000 тенкӗлӗх илчӗҫ.

Лотерея билечӗсене сарасси пысӑк ҫӗкленӳпе пырать.

В. ГУСЬКОВ.

Виҫӗ сехет хушшинче 200.000 тенкӗлӗх

КУСЛАВККА, октябрӗн 25-мӗшӗ. (Телефонпа). Паян ирхине районри пур колхозсенче те тата предприятисемпе учрежденисенче укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерея билечӗсене сарас ӗҫ пуҫланчӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем лотерея билечӗсене ҫӗршер, пиншер тенкӗлӗх илеҫҫӗ. Кӑнтӑрла ҫитнӗ тӗле районри колхозсенчен перекет кассине лотерея укҫине 200.000 тенкӗ ытла пырса хывнӑ. Лотерея билечӗсене сарас тӗлӗшпе «Путь Ленина», «Большевик», «Искра» колхозсем лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Вӑл колхозсенче лотерея билечӗсем туянман колхозниксемпе колхозницӑсем пачах та ҫук.

Комбинатра тата ытти предприятисенче те лотерея билетне сарасси ӑнӑҫлӑн пырать. Известь тӑвакан завод коллективӗ лотерея билечӗсен укҫине пӗр пайне ҫийӗнчех тӳленӗ. Охранник Корняков юлташ хӑйӗн уйӑхри ӗҫ укҫи хисепӗнчен 44 процент чухлӗ, работница Голышева 30 процент чухлӗ ҫыраннӑ.

Патриотла туйӑмпа ҫыранаҫҫӗ

ВӐРНАР, октябрӗн 25-мӗшӗ. (Телефонпа). Кӑнтӑрла иртни пӗр сехет тӗлне укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерея билечӗсене рабочисемпе служащисем хушшинче 79.000 тенкӗлӗх, колхозниксем хушшинче 581.000 тенкӗлӗх сарнӑ. Лотерея билечӗсен укҫине рабочисемпе служащисем 24.000 тенкӗ пухнӑ тата колхозниксем 193.000 тенкӗ тӳленӗ.

Лотерея билечӗсене сарас тӗлӗшпе Ворошилов ячӗпе тӑракан тата Ҫавалкас Хирпуҫӗнчи «Колхозница» колхозсем паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем билет укҫине ҫийӗнчех тӳлесе татнӑ. Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем 60.000 тенкӗлӗх ҫыраннӑ. Вӑл хисепрен 37.800 тенкине ҫийӗнчех тӳленӗ. Ҫавӑн пекех Вӑрманкасри «Самолет» колхоз членӗсем те 65.000 тенкӗлӗх ҫыраннӑ, 37.700 тенкине ҫийӗнчех тӳленӗ.

Лотерея билечӗсене сарасси трактористсем хушшинче ӑнӑҫлӑн пырать. Вӗсем 104.000 тенкӗлӗх ҫыраннӑ, 14.000 тенкине ҫийӗнчех тӳленӗ.

Л. ГЕРАСИМОВА,
Перекет кассин заведующийӗ.

Республика столицинче

Октябрӗн 25-мӗшӗнче укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерея билечӗсене сарасси пуҫланнӑ ятпа Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче пухусемпе митингсем пулса иртрӗҫ. Рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем лотерея билечӗсене илме пысӑк хаваслӑхпа ҫыранаҫҫӗ.

Тир сӑран комбинатӗнче 12 сехетчен 14.650 тенкӗлӗх сарнӑ. Ку вӑл уйӑхри ӗҫ укҫи хисепӗн 35 процентчӗ чухлӗ пулать. Техника контроль отделӗн пуҫлӑхӗ Лесин юлташ 500 тенкӗлӗх, цех начальникӗ Рыбаков 400 тенкӗлӗх, рабочисем Павлов, Авксентьев, Каталов юлташсем 200-шер тенкӗлӗх ҫыраннӑ. Рабочисемпе работницӑсем лотерея билечӗсене илме ҫыраннӑ чухне хӑйсем фронта пулӑшма яланах хатӗр пулни ҫинчен калаҫҫӗ.

Максим Горький ячӗпе тӑракан библиотекӑра ӗҫлекенсем лотерея билечӗсене уйӑхри ӗҫ укҫин 17 процентчӗ чухлӗ ҫыранса укҫине те ҫийӗнчех тӳленӗ. Вӗсем сберкассӑна пуринчен малтан 750 тенкӗ укҫа пырса панӑ.

И. В. Сталин юлташ Кордэлл Хэлл господина йышӑнни

Октябрӗн 25-мӗшӗнче СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен государственнӑй секретарьне Кордэлл Хэлл господина йышӑннӑ.

Калаҫура Ют Ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ тата США-н Совет Союзӗнчи посолӗ Г. А. Гарриман господин пулнӑ.

В. М. Молотов Антони Иден господина йышӑнни

Октябрӗн 22-мӗшӗнче Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Великобританин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрне Антони Иден господина йышӑннӑ.

Калаҫӑва Великобритани посолӗ А. К. Керр господин хутшӑннӑ.

В. М. Молотов Кордэлл Хэлл господина йышӑнни

Октябрӗн 23 мӗшӗнче Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен государственнӑй секретарьне Кордэлл Хэлл господина йышӑннӑ.

Англипе Америка делегацийӗсем Мускавра пурӑнни

Великобританин, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата Совет Союзӗн правительствисен представителӗсен Мускавра пыракан канашлӑвӗн участникӗсем октябрӗн 24-мӗшӗнче Пысӑк театрта «Лебединое озеро» ятлӑ балетра пулнӑ.

Центрти ложӑра Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ, Великобританин Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Министрӗ А. Иден господин, Великобритани посолӗ А. Керр господин, США посолӗ А. Гарриман господин хӑйӗн хӗрӗпе, Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн заместителӗсем А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, М. М. Литвинов, А. Е. Корнейчук, С. И. Кавтарадзе юлташсем, Англипе Америка Делегацийӗсен представителӗсем В. Стрэнг господин, С. Дэнн господин, Г. Хэкворт господин, генерал-лейтенант Г. Исмей, генерал-майор Д. Дин, коммодор К. Олефэн, ҫавӑн пекех тата Англипе Америка делегацийӗсен экспертӗсемпе сотрудникӗсем тата НКИД-ӑн ответлӑ сотрудникӗсем пулнӑ.

Ложӑна Британин, Америкӑн тата Совет Союзӗн флагӗсемпе илемлетнӗ.

Театра пынӑ халӑх В. М. Молотова тата Совет Правительствин ытти членӗсене те, А. Иден господина, А. Гарриман господина, А. Керр господина тата Англипе Америка делегацийӗсен ытти членӗсене нумайччен алӑ ҫупса кӗтсе илнӗ.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотисене пани

Ҫак кунсенче Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева юлташ Ҫӗмӗрлери «Большевик» заводри работниксене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотисене панӑ.

Производствӑлла заданисене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн ҫак юлташсем Хисеплӗ грамотӑсем илнӗ: диффузорщик Ф. М. Баюков, пӑспа ӗҫлекен турбина машинисчӗ А. С. Богачева, тӗп производствӑри смена мастерӗ А. И. Гогин, механически цехри тимӗрҫӗ А. И. Закалябин, главнӑй бухгалтер В. И. Кабатов, чӗртавар склачӗн начальникӗ Т. С. Клячкин, тӗп производствӑн выпарщицисем — Е. В. Матвеева, К. И. Мышакова, ремонтно-механически цех начальникӗ Н. А. Николаев, партбюро секретарӗ С. Я. Розенберг, кочегар М. Я. Сизова, тӗп производствӑн диффузорщикӗсем С. Ф. Смирнова, Н. М. Шараськин, электричество цехӗн электромонтерӗ И. И. Ширшов, завод директорӗ И. С. Шустин.

Награда илнисен ячӗпе завод директорӗ Шустин юлташ сӑмах тухса каланӑ, вӑл хӑйсен ӗҫне ҫакӑн пек хакланӑшӑн партипе правительствӑна тав тунӑ, малашне татах та лайӑхрах ӗҫлеме сӑмах панӑ.

Юлашкинчен Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева юлташ наградӑланисене Хисеплӗ грамота илнӗ ятпа саламланӑ, малашнехи ӗҫре ӑнӑҫусем тума суннӑ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечӗн пленумӗ

Ҫак кунсенче ВКП(б) Шупашкар хула комитечӗн черетлӗ VI-мӗш пленумӗ пулса иртрӗ. Вӑл икӗ ыйту — 1943 ҫулхи 3-мӗш кварталти партие илес ӗҫӗн итогӗсем ҫинчен тата хулара культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе мӗнле туса пыни ҫинчен сӳтсе яврӗ.

Кӑҫалхи 3-мӗш кварталти партие илес ӗҫӗн итогӗсем ҫинчен ВКП(б) хула комитечӗн секретарӗ Романова юлташ доклад турӗ.

Отчетлӑ тапхӑрта партин хулари организацийӗ хӑйӗн ретне 182 ҫынна илнӗ. Вӗсен хушшинче 51 рабочи. Партие илес тӗлӗшпе уйрӑмах чугун ҫулӑн 17-мӗш дистанцинчи, чӑлха фабрикинчи, 7-мӗш номерлӗ ФЗО шкулӗнчи, пристаньри пуҫламӗш парторганизацисем ӑнӑҫлӑн ӗҫленӗ.

Анчах 1-мӗш номерлӗ типографири, Чебторгри, Уполнаркомзагри, Горпромкомбинатри, ликерпа эрех заводӗнчи парторганизацисем юлашки виҫӗ уйӑх хушшинче хӑйсен ретне пӗр ҫынна та илмен.

Романова юлташӑн докладӗ тӑрӑх пренире 4 ҫын тухса каларӗҫ.

— Пирӗн пуҫламӗш парторганизаци,—тет Полукаров юлташ,—кӑҫал хӑйӗн ретне татах 85 ҫынна илчӗ. Вӗсен хушшинче 43 рабочи. Ҫамрӑк коммунистсем партиллӗ порученисене тӳрӗ кӑмӑлпа пурнӑҫласа пыраҫҫӗ, производствӑра стахановла ӗҫӗн лайӑх тӗслӗхӗсене кӑтартаҫҫӗ.

Анчах партбюро кандидатсемпе ҫителӗксӗр ӗҫлет-ха, вӗсене члена куҫма ҫителӗклӗ пулӑшмасть.

ВЛКСМ хула комитечӗн секретарӗ Трусова юлташ ҫамрӑксен патриотла пысӑк ҫӗкленӗвӗ ҫинчен калать. Хулари ҫамрӑксем комсомол 25 ҫул тултарнӑ уява пысӑк хавхаланупа хатӗрленеҫҫӗ. Ҫамрӑк рабочисемпе служащисем комсомол юбилейне производствӑри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илме тӑрӑшаҫҫӗ.

Хулари комсомол организацийӗ 3-мӗш кварталта хӑйӗн ретне 440 ҫынна илнӗ, вӗсенчен рабочисем—323. Анчах комсомолӑн хӑшпӗр организацийӗсем юлашки вӑхӑтра союзра тӑман ҫамрӑксем хушшинче ӗҫлессине вӑйсӑрлатнӑ.

Коопинсоюзри пуҫламӗш парторганизацин секретарӗ Мицина юлташ ВКП(б) хула комитечӗн оргинструкторски отделне критиклерӗ. Оргинструкторски отдел работникӗсем пуҫламӗш парторганизацисенче сахал пулаҫҫӗ, парторганизаци секретарӗсене ӗҫлеме вӗрентмеҫҫӗ, ӗҫре пулӑшмаҫҫӗ.

«Хулари культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫ мӗнле пулса пыни ҫинчен» ВКП(б) хула комитечӗн секретарӗ Ислюков юлташ доклад туса пачӗ. Вӑл ҫакна палӑртрӗ: юлашки ҫулсенче, вӑрҫӑ вӑхӑтӗн йывӑр условийӗсенче, хулара культурӑллӑ пурнӑҫ чылай лайӑхланчӗ. Кинопа театра ҫӳрекенсен, библиотекӑсенче вулакансен хисепӗ ӳснӗ. Юлашки вӑхӑтра хулара художествӑллӑ пултарулӑхӑн 25 кружокӗ ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Кӑҫалхи апрельпе сентябрь уйӑхӗсенче туса ирттернӗ смотрсем халӑх творчестви чечекленсе пынине яр-уҫҫӑн кӑтартса пачӗҫ, вӗсене 1.242 ҫын хутшӑннӑ.

Анчах, пӗтӗмӗшпе илсен, хулари культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе ҫителӗклӗ теме ҫук-ха. Хӑшпӗр клубсемпе хӗрлӗ кӗтессем ӗҫлеме чарӑннӑ. Клубсене кирлӗ пек йӗркелемен, вӗсене япӑхтарса янӑ, ҫавӑнпа та вӗсем культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫӗн чӑн-чӑн центрӗсем пулса тӑрайман-ха.

Докладчик радиоузел, кино тата театр ӗҫне критиклерӗ.

Ислюков юлташӑн докладӗ тӑрӑх пренире Лихачев (Наркомздрав), Юткевич (Н-ски завод), Кириллова (хулари ҫутӗҫ пайӗ), Кӑлкан (Искусство ӗҫӗсен управленийӗ), Аникин (хула совет исполкомӗ) тата Малай (Н-ски завод) юлташсем тухса каларӗҫ.

Сӳтсе явнӑ ыйтусем тӑрӑх пленум тивӗҫлӗ решенисем йышӑнчӗ.

Пленум Ислюков юлташа ВКП(б) хула комитечӗн виҫҫӗмӗш секретарӗ пулма ҫирӗплетрӗ тата ӑна ВКП(б) хула комитечӗн бюро членӗсен составне кӗртрӗ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 24-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 24-мĕшĕнче МЕЛИТОПОЛЬ хулин районĕнче пирĕн çарсем, тăшманăн оборонине татнă вырăна аслăлатасшăн çапăçса, СЕМЕНОВКА, ГУТЕРТАЛЬ, ИОГАНЕСРУЭ ятлă вăйлă тĕреклетнĕ ялсене тата ТАШЕНАК чугун çул станцине тытса илнĕ.

КРИВОЙ РОГ енче пирĕн çарсем наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 10 километра çити малалла кусна, халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăнса илнĕ, вĕсем хушшинче БАШТИНА, ТЕРНОВАТКА, НЕДАЙ ВОДА, ЛОЗОВАТКА (Кривой Рог хулинчен 10 километр çурçĕртерехре), ВЕСЕЛЫЕ ТЕРНЫ, САИВКА, ГУРОВКА, АЛФЕРЕВО, ВАРВАРОВКА, БОГДАНОВКА ятлă пысăк ялсем тата САВРО, РЯДОВАЯ, ТЕРНЫ, КАЛОЧЕВСКОЕ чугун çул станцийĕсем пур.

РЕЧИЦЫ хулинчен кăнтăртараххра пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сире-сире ярса, ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, ДУБРОВКА, ЧАНЕЦ, ТУЧКИ, ОСТРОВЫ, ТРОСТИНЕЦ, КРАСНЫЙ РОГ, СЕВКА ятлă вăйлă тĕреклетнĕ ялсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлăн разведка тунă тата артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Октябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем фронтăн пур участокĕсенче те нимĕçсен 148 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 46 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Мелитополь хулин районĕнче пирĕн çарсем, тăшман оборонине татса, малалла куçса пынă, вăйлă тĕреклетнĕ темиçе пункта йышăнса илнĕ. Чылай участоксенче совет чаçĕсем Мелитопольпе Запорожье хушшинчи чугун çул çине тухнă. Пĕр ял патĕнче ытла та хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Нимĕçсем кунта пысăк вăйсем илсе пынă, кирек мĕн пулсан та çав яла хăйсен аллинче тытса тăма шутланă. Совет артиллерисчĕсем, танкисчĕсем тата пехотинецĕсем тăшмана аркатса тăкнă та çак яла тытса илнĕ. Тĕрлĕ участоксенчи çапăçусенче паян 2.000 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, 66 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 24 тупă, 85 хир тупти, 44 миномет тата 150 ытла пулемет персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче 5 танк, 28 тупă, 93 пулемет, боеприпассен икĕ склачĕ тата япаласен склачĕ пур. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна тыткăна илнĕ.

хупăрласа илнĕ нимĕçсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Штабра ĕçлекен 7 офицера тыткăна илнĕ. Совет патриочĕсем 2 паровоза сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн вагонĕсемпе 3 çар складне вут тивертсе янă. Чугун çул çинчи кĕпере сиенленĕ, стрелкăсене тата чугун çула ишĕлтерсе пĕтернĕ. Çак районрах партизансем Германие каторгăллă ĕçе хăваласа каякан 1.000 ытла мирлĕ совет гражданне нимĕçсенчен хăтарнă.

Пирĕн авиаци нимĕç çарĕсене пыра-пыра çапнă. Совет летчикĕсем пыра-пыра çапнине пула тăшманăн нумай танкĕ тата 200 автомашинине çити пĕтнĕ, 3 паровоз тата чугун çул çинчи 40 вагонпа цистерна çĕмĕрĕлнĕ е сиенленнĕ. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 14 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кривой Рог хули енче пирĕн çарсем наступлени туса пынă. Пирĕн танковăй тата пехотнăй чаçсем наступлени туса пынине тăшман чарма хăтланни ăнăçман. Пирĕн çарсем, малалла куçса пырса, 50 яла ытла йышăнса илнĕ, вĕсен шутĕнче Кривой Рог хулинчен 10 километр çурçĕртерехре вырнаçнă Лозоватка та пур. Тăшман калама çук пысăк çухатусем тÿсет. Пĕр участокра пирĕн танкистсем нимĕç пехотин полкне аркатса тăкнă, тăшманăн 39 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 44 тупă, боеприпассен пысăк склачĕсене тата çар пурлăхĕн склачĕсене тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр чаçăн боецĕсем яла тытса илнĕ те нимĕçсен артиллери батарейине, 8 танк, çар пурлăхĕсем тиенĕ лавсене тытса илнĕ, чылай çынна тыткăна илнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче пĕр кун хушшинче нимĕçсен 24 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Речицы хулинчен кăнтăртараххра пирĕн çарсем, Днепр шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçса, вăйлă тĕреклетнĕ темиçе яла тытса илнĕ. Тăшман питĕ хаяррăн хирĕç тăрать. Пĕр участокра нимĕçсем пĕр кун хушшинче 20 хут ытла контратака тунă. Тăшман танкĕсем тата пехоти, авиацин чылай пысăк вăйĕсем пулăшса пынипе, пирĕн ретсене темиçе хут та тапăннă, анчах та, пысăк çухатусем тÿссе, каялла чакнă. Çак çапăçусенче тăшманăн 1.500 салтакĕпе офицерĕнчен кая мар вилнĕ. Пирĕнисем 14 танк, 12 тупă, 26 миномет пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче 11 тупă тата пĕтĕмпех юсавлă пĕр танк пур. Тыткăна илнĕ.

* * *

Балтика тинĕсĕнче тăшманăн пĕтĕмĕшпе 3.000 тонна таякан транспортне путарнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ çак кунсенче пĕр пысăк чугун çул станцине хăюллăн тапăннă. Запаслă çулсем çинче нимĕç çарĕсен 2 эшелонĕ тăнă. Партизансем часовойсене пĕр сасăсăр пĕтерсе тăкнă та, 2 поездне те çавăрса илсе, гитлеровецсене пеме тытăннă. Сасартăк

* * *

Киев хулинчен çурçĕртерехре нимĕçсен 339-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксемпе офицерсен пысăк ушкăнĕ тыткăна парăннă. 692-мĕш полкри 12-мĕш ротăн тыткăна лекнĕ командирĕ Гельмут Кельнер оберлейтенант çапла каласа панă: «Людиново районĕнчи оборонăллă йывăр çапăçусенче пирĕн дивизи хăйĕн йышĕн çуррине ытла тата пĕтĕм хĕçпăшалне тенĕ пекех çухатрĕ. Пире часах Киева ячĕç, унтан вара фронтăн çĕнĕ участокне ăсатрĕç. Пирĕн командовани вырăссене Днепр шывĕ урлă каялла ывăтса яма приказ илнĕччĕ. Анчах пирĕн контратакăсем пăчланса ларчĕç. Ун хыççăн вара хамăр йышăнса тăракан позицисене хуть мĕн пулсан та хамăр алăрах тытса тăмалла текен приказ илтĕмĕр. Ку приказа каллех пурнăçлама пултараймарăмăр. 3-мĕш батальона вырăссем çавăрса илчĕç те пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкрĕç. Дивизие каялла ывăтса ярса, çĕмĕрсе тăкрĕç. Салтаксемпе офицерсем нумайĕшĕ тыткăна парăнчĕç».

692-мĕш полкри 10-мĕш ротăн тыткăна лекнĕ командирĕ Герман Виндевальд капитан çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн полк питĕ йывăр çухатусем тÿсрĕ. Манăн çынсем йăлтах ывăнса çитрĕç, 4 эрне хушши эпир пĕрре те салтăнса курман, çăвăнман та. Ман ротăра мĕн пурĕ те 8 салтак кăна тăрса юлчĕ. Эпĕ вара, хĕçпăшала пăрахса, тăрса юлнă салтаксемпе пĕрле тыткăна парăнтăм».

Резерври батальонăн 3-мĕш ротин тыткăна лекнĕ командирĕ Вилли Веренберг лейтенант çапла каласа панă: «Виçĕ кун хушши пынă çапăçусенче ман ротăна аркатса тăкрĕç. Пĕтĕм ротипе те 13 çын кăна тăрса юлчĕ. Эпĕ салтаксене çапла каларăм: «Вырăссем чăтма çук вăйлăн переççĕ, хирĕç тăни усăсăр. Тыткăна парăнас пулать», терĕм. Салтаксем пурте манпа килĕшрĕç те, эпир вара тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Чернигов облаçĕнчи Озеряны ялĕнчи çынсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тунă чăтма çук тискер ĕçсем çинчен çапла каласа панă: «Пирĕн яла йышăнса илнĕ хыççăн гитлеровецсем ялти мирлĕ халăха темиçе çĕр çынна асаплантарса вĕлерчĕç. 1943-мĕш çулхи мартăн 19-мĕшĕнче нимĕç ирсĕрĕсем 93 хуçалăха пĕтĕм хуралтисемпе пĕрлех çунтарса ячĕç. Çав пушарта 267 çын çунса кайнă, вĕсене нимĕçсем пÿрчĕсенчен тухма ирĕк паман. Çав пушарта ялти учитель Петр Гольченко, колхозниксем Елисей Зуб, Петр Ройко тата хĕрарăмсемпе ачасем нумай çунса кайнă. Июль уйăхĕнче гитлерла пуçкасакансем Наталия Кононенко ятлă çамрăк хĕре тытса хупрĕç, ăна вĕсем партизансен вил тăприсем çине чечек кăшăлĕ хунăшăн айăпланă. Нимĕçсен вăрă-хурахĕсем Кононенкона чăтма çук тискеррĕн асаплантарса пĕтернĕ. Халран кайнă хĕрача, хăйĕн юлашки вăйĕсене пухса, çапла кăшкăрса ячă: «Сывă пултăр советлă тăван çĕршыв! Партизансене салам!» тенĕ. Вăра вилес патне çитнĕ патриоткăна нимĕç пуçкасаканĕсем çăла пăрахнă».

Ростовра трамвай çÿреме пуçланă

Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем Ростоври трамвай хуçалăхне пысăк сиен туса хăварнă. Вĕсем мĕнпур подстанцисене, парксене, трамвай вагонĕсене юрăхсăра кăларнă. Халь трамвай çÿремелли çулсене 36 километр тăршшĕ юсанă, 60 вагон, 2 трамвай паркне, пĕр подстанцие юсаса хута янă. Халь «Россельмаш» завочĕ патне каякан тĕп çула юсаса çитереççĕ. Çак кунсенче Ростовра трамвайсем йĕркеллĕ çÿреме пуçланă. (ТАСС).

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕнче

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ, чугун çул работникĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Канашри вагонсем юсакан завода (начальникĕ Поздняков, партбюро секретарĕ Егорушкин, завком председателĕ Мосенко юлташсем) Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш преми пама йышăннă.

Заводри çамрăксем стахановла вахтăра

Канашри вагонсем юсакан заводри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем Ленинпа Сталинла комсомол 25 çул тултарнă уява производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Забиякин юлташăн цехĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем, Люблински чугун çул тĕввинче ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксен сыравне сÿтсе явса, комсомол 25 çул тултарнă ятпа стахановла вахтăна тăрса çакăн пек обязательствăсем илнĕ:

1. Комсомол 25 çул тултарнă тĕле кашни çамрăк рабочин ĕç нормине 150 процентран кая мар тултармалла, комсомолецсен кашнинех двухсотниксен ретне тăмалла.
2. Цехри пур комсомолецсен те ĕçе епле организацилесе тĕрĕслес шутпа пулса иртекен обществăллă смотра активлăн хутшăнмалла, рационализаторла сĕнÿсем пиллĕкрен кая мар пухмалла.
3. Ĕç пĕтнĕ хыççăн цехри комсомолецсен вăйĕпе хĕл валли 150 шăпăр туса хатĕрлемелле.
4. Стахановецсен ĕç опычĕсене сарас шутпа стахановла шкул уçмалла, октябрь уйăхĕнче çав шкул урлă 50 çамрăка вĕрентсе кăлармалла.
5. Цехри рабочисем пурăнакан общежитие шефа илсе, ăна хĕл валли тимлĕн хатĕрлесе çитермелле тата унта культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемелле.

Çак цехри комсомолецсемпе çамрăксем заводри мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксене хăйсем пек стахановла вахтăна тăма чĕннĕ. Вĕсен чĕнĕвне заводри çамрăксем хавăрт йышăнса илнĕ.

Вагонсем тăвакан цехри комсомолецсемпе çамрăксем, стахановла вахтăна тăнă хыççăн, 2—3 шер норма тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Слесарь Троицкий юлташ ĕç тухăçлăхне 300 процента çити ÿстерчĕ, слесарь-автоматчик Чуранов ĕç нормине 220 процент, слесарь Фролов—200 процент тултараççĕ. Цеха нумай пулмасть килсе кĕнĕ çамрăк слесарь инструментальщик Якимов та куллĕнех икшер норма тултарать, ĕç хыççăн çĕнĕ специальноçа вĕренес тĕллĕшпе çине тăрса ĕçлет. Çавăн пекех Халиулин, Султанбеков юлташсем те ĕç нормине тултармасăр цехран тухмаççĕ.

Вагон ураписем тăвакан цехри комсомолецсем те стахановла вахтăра тухăçлăн ĕçлеççĕ. Токарь Спиридонов юлташ вахтăна тăнă чухне ĕç нормине 150 процент тултарма пулнăччĕ, халĕ вăл яланах икĕ норма тултарать.

(Хамăр инфор.).

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пĕтернĕ

— Пирĕн Хĕрлĕ Çар, этем историйĕнче пулман паттăрлăх кăтартса, тăшмана хамăр çĕр çинчен хăвалать. Çакă пире татах та тухăçлăрах ĕçлеме чĕнет,—тенĕ Канаш районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ В. Никифоров юлташ уйхир ĕçĕ пуçланас умĕн пухнă колхозниксен аслă пухăвĕнче.

Çавăнта колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса пĕтерес тĕллĕшпе хăйсем çине татăклă обязательствăсем илнĕ.

Июль уйăхĕ пĕтес умĕн вара тыра вырма тухнă. 616 гектар тырра 16 кун хушшинче вырса пĕтерсе, капана хывнă. Уйра кунĕн-çĕрĕн хĕрÿллĕ ĕç пынă. К. Григорьев юлташ ертсе пыракан бригада тырă вырса пĕтеричченех уйран таврăнман. Уйрах апатланнă, каннă. Çапла майпа ĕçлесе, ку бригада уборка ĕçне чи малтан вĕçленĕ. Уборкăн виççĕмĕш кунĕнче колхозра авăн çапма тытăннă. Çав вăхăтрах государствăна тырă леçес ĕçе те организациленĕ. Паянхи куна Киров ячĕпе тăракан колхоз пур ялхуçалăх ĕçĕсене те туса пĕтернĕ.

Çак колхозри ĕçсене пăхса тухсассăн, кунти çынсем фронтри пек ĕçлени курăнать. Пур çĕрте те йĕркелĕх. Выльăх-чĕрлĕх витисем яланах таса. Вĕсене хĕллене хатĕрлесе çитернĕ. Халĕ 100 сурăх валли çĕнĕ вите тăваççĕ. Колхозра лайăх енĕпе паларса тăракан фронтовик арăмĕсем Я. Ковалева, И. Григорьева, А. Кудрявцева колхозниксем, упăшкисем фронтра мĕнле çапăçнине асра тытса, вăхăта шута илмесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем пур ĕçре те икĕ виçĕ çыншăн ĕçлеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана колхоз ытлашшипех пурнăçланă. Планпа 125 пуç майракаллă выльăх пулмалла пулсан, кунта халь 132 пуç шутланать. Сыснасем 230 пулмалла, халĕ 269 сысна çитнĕ.

Колхоз кăçал йышлă тырпул туса илчĕ. Халĕ вăл ĕçкунĕсем тăрăх колхозниксене тырă пама тытăнать. Пĕр ĕçкунĕ пуçне вăтамран 2,5 килограмм тырă тивет.

Колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес хастарлăхĕ пысăк.

Ф. МАЛЫШКИН, (Хамăр корр.).

Килес çул валли вăрлăх сортласа хутăмăр

ЭЛĔК. Ураскильтри «Маяк» колхоз кăçал фронта тивĕçлĕ пек ĕçлерĕ. Колхоз октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государство умĕнчи парăмсене пурне те парса татрĕ, октябрĕн 10-мĕшĕнче авăн çапса пĕтерчĕ. Çак ответлă ĕçсене чыслăн пурнăçласишĕн уйрăмах ялти комсомолецсемпе çамрăксем хытă тăрăшрĕç. Н. Димитриевпа В. Андреев комсомолецсем ертсе пынипе транспорт бригади лайăх ĕçлерĕ. Бригада 25 километрти хатĕрлев пунктне кунсеренех пĕрер хут хутларĕ. Государствăна тырă турттарса пачĕ.

Техникăллă культурăсем кăçал тухăçлă пулчĕç. 4 гектар çинчи кантăра вăхăтра татнă, çапнă, шыва хутса кăларнă. Çак иртнĕ кунсенче колхоз хатĕрлев пунктне 19 центнер сÿскантăр леçрĕ.

Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлесенех пирĕн колхоз килес çул акма вăрлăх сортлама тытăнчĕ. Чи лайăх тырра суйласа илсе, вăрлăх фондне хыврăмăр. Хĕрлĕ Çар валли çĕрулми типĕтме бригада организацилерĕмĕр. Хамăрăн тăван Çара пахча-çимĕç та та çĕрулми типĕтсе парасси—ответлă ĕç. Çак ĕçе правлени членĕ Молотков юлташ ертсе пырать. Бригада кĕске вăхăтрах 4 центнер çĕрулми типĕтрĕ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Уяв парнисем ячĕç

ВАРМАР. Районри ĕççыннисем мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерÿвĕсемпе хавасланса, фронтовиксем валли Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарнă ятпа уяв парнисем ярса пачĕç: 443 килограмм какай, 130 килограмм колбаса, 80 килограмм çу, 106 килограмм пыл, 3.160 çăмарта, 53 килограмм варени, 127 килограмм тăварланă кăмпа, 2.045 килограмм тулă çăнăхĕ, 100 килограмм тăварланă хăяр, 100 килограмм помидор, 30 уйрăм посылка, 3 тонна пахча-çимĕç продукчĕсем, кунсăр пуçне тата типĕтнĕ çĕрулми, купăста, эрех ярса пачĕç

И. СМИРНОВ.

СЕНТĔР. Ярославка ялсоветĕнчи «Первая борозда» колхоз, кĕрхи ĕçсене пĕтерсе пынă май, хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çар валли Октябрь уявĕ ячĕпе парнесем ячĕ. Пĕтĕмпе колхоз 32 килограмм сухари, 300 тенкĕлĕх эрех, типĕтнĕ аш, шăратнă çу, енчĕксемпе сăмса тутрисем, алшăллисем т. ыт. те пухса, ултă уйрăм посылка туса леçрĕ. Кусемсĕр пуçне, учительница Соколова юлташ пуçарнипе, колхоз хĕрĕсем виçĕ мăшăр носки, икĕ мăшăр çăм алса çыхса пачĕç.

Паттăр фронтовиксем валли парнесем пухасси ăнăçлăн малалла пырать.

З. СЕМЕНЧУК.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене — ăшă тумтирсем

Шупашкарти Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи рабочисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 15 мăшăр çăм носки, 15 мăшăр алшиш çыхса хатĕрлерĕç. Парнесем хатĕрлес енĕпе цех начальникĕ Ильина тата Леонтьева работница пуринчен ытларах тăрăшса ĕçлерĕç.

КУЧКОВ.

Пирĕн авиаци Знаменка, Фастов, Долинская, Апостолово чугун çул тĕввисене тата Никополь станцине тапăнни

Октябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Знаменка, Фастов, Долинская (Кривой Рог хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре), Апостолово (Кривой Рогран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре), Джанкой чугун çул тĕввисенчи тата Никополь станцинчи нимĕçсен çар эшелонĕсемпе склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула 8 поезд çĕмĕрĕлнĕ. Темиçе тĕлте пушар тухнă. Пушарсенче тăшман вагонĕсем, платформисем, цистернисем тата боеприпассен, çар техникин, горючин склачĕсем çуннă. Пушарсенче нумай взрывсем пулнă.

Пирĕн пур самолетсем те хăйсен базисене таврăннă.

Пирĕн авиаци Знаменка, Фастов чугун çул тĕввисем çине тата Никополь станцийĕ çине бомбăсем пăрахни

Октябрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци нимĕçсен Знаменко, Фастов чугун çул тĕввисенчи тата Никополь станцинчи çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивнипе, боеприпассем тиенĕ икĕ эшелон сирпĕнсе кайнă. Пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Боевой заданирен пирĕн пĕр самолет каялла таврăнман.

ТАСС опровержениé

Рейтер агентствин Женеваври корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Балканри пур çĕршывсене те совет парашютисчĕсене антарнă пулать. Парашютистсем «Мĕнпур славянсен блокĕ» тăвасси çинчен çав çĕршывсенчи халăх мĕн шухăшланине сăнама аннă пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: совет парашютисчĕсем Балканри çĕршывсене аннă тесе ĕнентерни пĕртте тĕрĕс мар.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: акăлчансен 8-мĕш армийĕн фронтĕнче патрульсем çапăçнă тата тăшманăн хирĕç тăракан ушкăнĕсене, пĕр-пĕринчен уйăрса янăскерсене, пĕтерсе пынă. Варринчи секторта, американецсен 5-мĕш армийĕн фронтĕнче, пĕр кирлĕ çÿллĕ вырăна тытса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер те çаплах тăшманăн чугун çулĕсене, артиллери позицийĕсене, çарсем пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсене, моторлă транспортне тата склачĕсене атакăланă.

Эгей тинĕс районĕнче акăлчансен бомбардировщикĕсем октябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле каллех Родос утравĕ çинчи аэродрома тапăннă. Бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивнипе тăватă тĕлте пушар тухнă.

Çавăн пекех тата тăшманăн Афины районĕнчи аэродромĕ çине, Наксос тата Сирос утравĕсем патĕнчи суднăсемпе портри сооруженисем çине бомбăсем пăрахнă.

РИМРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Римра трамвай пĕтĕмпе тенĕ пекех çÿреме пăрахнă. Нимĕçсем мĕнпур автомобильсемпе лашасене йăлтах тытса илнĕ. Транспорт çуккипе апат-çимĕç кризисĕ вăйланса пырать.

Хулара вăрттăн листовкăсем сараççĕ. Гестапо хĕсĕрлет пулин те, кунсеренех тенĕ пекех фашизма хирĕçле выступленисем пулса иртеççĕ, саботаж тăваççĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ КАССЕЛЕ, ФРАНКФУРТА ТАТА КЕЛЬНА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Германин çар промышленноçĕпе машинăсем тăвакан промышленность центрне—Кассель хулине вăйлăн пырса тапăннă.

Англи самолечĕсен ытти соединенийĕсем Франкфурта тата Кельн хулине тапăннă. Англи бомбардировщикĕсене тăшманăн çĕрлехи йышлă истребителĕсем хирĕç тăнă. Çак операцисенчен акăлчансен 45 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн темиçе истребительне персе ÿкернĕ.

Тăшман самолечĕсен пысăк мар хисепĕ Англин пĕр-пĕринчен аякра выртакан районĕсене тапăннă. Бомбăсем тунă сиен пысăках мар. Вилнисем те нумай мар.

Бразилия тăшманпа çапăçма çар яма хатĕрленет

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Бразилия тăшманпа çапăçма яма хатĕрлекен корпусри салтаксен сывлăхне врачсем пăхса тухма тытăннă ĕнтĕ. Пĕлтернĕ тăрăх, çитес çулхи январьпе февраль уйăхĕсенче Бразилия тăшманпа вăрçма 60 пин çынлă яланхи арми тата 40 пин çынлă пулăшуллă арми ăсатса ярать.

ФРАНЦИРЕ ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕМ ВУЛКАН ÇИНЧЕ ПУРĂННĂ ПЕК СЕХĔРЛЕНСЕ ПУРĂНАÇÇĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 16-мĕшĕнчен вара Парижра Гитлерăн ĕçлекенсем «пухас» тĕллĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйĕ Заукель пурăнать. Ăна сыхлама Парижа нимĕç полицейскийĕсемпе гестаповецсене питĕ нумай янă. Заукель вăл Парижра вăрттăн ĕçлекен патриотла организацисемпе тăтăшах кĕрешес ĕçе организацилеме пынă.

Заукель Парижа пыни ак мĕнтен килнĕ: француз патриочĕсем нимĕçсене çав тери хытă хирĕç тăма пуçланă. Лаваль хăй Гитлертан илнĕ приказсене пурнăçа кĕртеймест. Виши «правительствипе» оккупантсене пуринчен ытла çакă хăратать: Германие ирĕксĕр ĕçе яма мобилизацилемелли французсем хуласенчен тарса каяççĕ те партизансен отрячĕсемпе пĕрлешеççĕ.

Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарас умĕн тумалли докладсемпе калаçусен ТЕМИСЕМ

1. Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни.
2. Кăçал Хĕрлĕ Çар тунă аслă çĕнтерÿсем.
3. Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕ тĕрекленни.
4. Совет тылĕ—фронтăн çирĕп никĕсĕ.
5. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту.
6. Тăшмантан тасатнă районсенчи хуçалăха çĕнĕрен ура çине тăратас задача—ĕççыннисен чи кирлĕ задачи пулса тăрать.
7. Ленинпа Сталин партийĕ—Хĕрлĕ Çар тăвакан çĕнтерÿсене хавхалантарса, организацилесе пыраканĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Виктор Захарович Лебедев юлташа Чехословаки правительстви патĕнче ССР Союзĕн чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ пулма уйăрса лартнă.

Тÿрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн иртнĕ номерĕнче, малтанхи страницăн пĕрремĕш колонкинче, аялтан 12-мĕш йĕркере—«вуникĕ хут пĕр хараç персе» тенĕ вырăнне «çирĕм хут пĕр хараç персе» тесе вулас пулать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
октябрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун американецсен
МИССИЯ В МОСКВУ
ятлă фильмне кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

Шупашкар пасарĕнчен кÿлнĕ ЛАША УРАПИМĔНĔНЕХ ÇУХАЛНĂ. Паллисем çапла: ăйăр, тĕсĕ—хура турă, 8 çулта; çамки çинче шурă тăрăх анать, кайри сылтăм ури уксах, пакăлчак тĕлĕнче шурă.
Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтат, пăр: Чувашская АССР, Чебоксарский район. Правлению Больше-Ильбешевского колхоза „Красная звезда".

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1857 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б 53 84 п. л.